25-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
МАЙ
15
ШĂМАТКУН
101(6338) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Машинăпа тракторсен паркне пысăк тухăçлăхпа ĕçлеттернĕшĕн, ЧАССР Наркомземĕпе Наркомземăн Политсекторĕ тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри ХИСЕП ХĂМИ çине çаксене кĕртнĕ:

16. **Канаш МТС-ĕ** (директорĕ **И. А. Зайцев**, политотдел начальникĕ **А. С. Степанов**, старши механикĕ **Толкачев**). МТС майăн 10-мĕшĕ тĕлне çураки вăхăтĕнче тракторпа ĕçлемелли плана 102 процент тултарнă.

17. **Комсомольски МТС-ĕ** (директорĕ **Алексеев**, политотдел начальникĕ **А. Г. Долгов**, старши механикĕ **Кудрявцев**). МТС çураки вăхăтĕнче тракторпа ĕçлемелли плана 101 процент тултарнă.

18. **Шăхасан МТС-ĕнчи 9-мĕш тракторнăй бригада** (бригадирĕ **Н. И. Чернов**). Çемçе суха çине куçарса шутласан, бригада планпа палăртнă 319 гектар вырăнне 321 гектар ĕçленĕ, 152 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

19. **Елчĕк МТС-ĕнчи 10-мĕш тракторнăй бригада** (бригадирĕ **Г. Н. Струнков**). Çемçе суха çине куçарса шутласан, бригада планпа палăртнă 316 гектар вырăнне 521 гектар сухаланă. 615 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

20. **Елчĕк МТС-ĕнчи 8-мĕш тракторнăй бригада** (бригадирĕ **П. И. Марков**). Çемçе суха çине куçарса шутласан, бригада планпа палăртнă 295 гектар вырăнне 433 гектар сухаланă, 415 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

21. **Елчĕк МТС-ĕнчи 6-мĕш тракторнăй бригада** (бригадирĕ **А. П. Павлов**). Çемçе суха çине куçарса шутласан, бригада планпа палăртнă 316 гектар вырăнне 434 гектар сухаланă, 350 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

22. **Елчĕк МТС-ĕнчи 7-мĕш тракторнăй бригада** (бригадирĕ **А. Охоткин**). Çемçе суха çине куçарса шутласан, бригада планпа палăртнă 316 гектар вырăнне 421 гектар сухаланă, 505 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

23. **Елчĕк МТС-ĕнчи 11-мĕш тракторнăй бригада** (бригадирĕ **А. А. Мякинин**). Çемçе суха çине куçарса шутласан, бригада планпа палăртнă 316 гектар вырăнне 415 гектар сухаланă. 550 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

Çуллахи вăхăтра вут-кăвартан сыхă тăрар

Обществăллă пурлăха тата уйрăм çынсен пурлăхĕсене сыхлассишĕн ССР Союзĕн кашни гражданинĕн, кашни ĕççыннин ответлă пулмалла. Вăл халĕ — совет халăхĕ умĕнче тăракан пысăк ĕçсенчен пĕри.

Юлашки вăхăтра пирĕн Чăваш республикинче пушара хирĕç кĕрешес ĕçе лайăхрах туса пыма тытăнчĕç. Нумай предприятисене, колхозсен витисене, амбарĕсене вĕсен таврашĕнчи ăпăр-тапăрсемпе çўп-çапсенчен тасатнă. Нумайĕшĕнче пушар хатĕрĕсем юсавлă усранаççĕ. Вут-кăвара сўнтерме кил-çуртсем патне хăйăр тата шыв хатĕрлесе лартнă. Пушартан сыхланас тĕлĕшпе халăх хушшинче ăнлантарас ĕçе те туса пыраççĕ.

Пирĕн республикăра лайăх ĕçлекен дружинăсем сахал мар. Куславкка районĕнчи Варасăр, Куснар ялсовечĕсем ку ĕçре уйрăмăнах лайăх ĕçлеççĕ. Кунти пушар дружинисен членĕсем черетлĕ хурала аван йĕркелесе пыраççĕ. Пушар инвентарĕсем пурте юсавлă. Кашни килтех пўрт умĕнче шыв тата хăйăр хатĕрлесе лартнă. Кунпа пĕрлех пушар тухасран сыхланса тăрасси çинчен колхозниксем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕçе кулленкун туса пыраççĕ. Çавăн пекех Комсомольски районри «Победа», «Красный Октябрь» колхозсенчи ирĕклĕ пушар дружинисем те начар мар ĕçлеççĕ. Дружинăра тăракан çынсене пушара хирĕç кĕрешме, тăшман сывлăшран вут тивертекен бомбăсем пăрахассинчен сыхланма вĕрентеççĕ. Пушара сўнтерме шыв пухса усрама пĕвесем тунă.

Анчах республикăри хăшпĕр предприятисемпе колхозсенче вут-кăвартан сыхланас ĕçе кирлĕ пек организацилемен-ха. Сăмахран, Куславкка МТС-ĕнче, Сĕнтĕр районĕнчи Жданов тата Молотов ячĕсемпе тăракан колхозсенче пушара хирĕç кĕрешмелли хатĕрсем сахал, пуррисем те юсавлă мар, колхозсен амбарĕсемпе витисем патĕнче хурал тăмаççĕ. Хăшпĕр райцентрсенче те ку ĕç çине сўрĕккĕн пăхаççĕ. Куславкка, Вăрмар райцентрĕсенче кивĕ инвентарьсене юсаса хуман.

Çуллана кĕнĕ май пушарсем пулма пултарас хăрушлăх ўсет. Пушарсем пуринчен ытла ялсенче çуллахи вăхăтра нумайрах пулаççĕ. Çавăнпа та колхозсенче вут-кăвара сийĕнчех сўнтерме кирлĕ япаласем пурте (насоссем, витресем, багорсем, пусмасем, пуртăсем т. ыт. те) хатĕр пулмалла. Кашни çурт сывăхнех хăйăр тата шыв тултарнă катка-пичкесем лартмалла. Сторăжсемпе дозорсен обществăллă харпăрлăха куç шăрçине сыхланă пек сыхлас пулать. Кашни ялтах лашасемпе хурал тăракансем, дозорсем талăкĕпех пулмалла.

Пушара хирĕç кĕрешекен дружинăсен йышĕ юлашки вăхăтра чылаях улшăнчĕ. Хĕрлĕ Çар ретне кайнисен вырăнне çĕнĕ çынсем тăчĕç. Çавăнпа та пожарниксене тата ирĕклĕ пожарнăй дружинăсенче тăракан çынсене хăйсен ĕçне тума вĕрентмелле. Вĕсен хăйсен ĕçне тĕплĕн пĕлмелле. Унпа пĕрлех пушарсене хирĕç кĕрешме мĕнпур ĕççыннисене вĕрентсе пымалла.

СССР Совнаркомĕ сывлăшран тапăннинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланма пур граждансене те обязательнăй йĕркепе вĕрентесси çинчен йышăннă постановление тивĕçлĕн пурнăçласа пымалла.

Пушар вăл сўнтермесĕр пăрахнă шăрпăкран, пирусран, кăмакаран тата ытти сенчен те тухма пултарать. Çавăнпа та кашни колхозникăн пўрт кăмакисене, кăмака мăрйисене юсавлă усрама тăрăшас пулать. Çуртйĕр сывăхĕнчи мунчасене çуллахи вăхăтра никам та ан хуттăр.

Ялсовет исполкомĕсен хăйсен территорине кĕрекен колхозсенчи пушар дружинисене тăтăшах тĕрĕслесе тăрасси çинчен манмалла мар.

Хула совечĕсемпе ялсовет исполкомĕсен, предприяти руководителĕсен, колхоз правленийĕсен пушара хирĕç кĕрешес ĕçре çирĕп йĕркелĕх туса хумалла.

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариатĕнче

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариачĕ, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн 1943 çулхи апрельти итогĕсене пăхса тухса, **Челноков** главнăй инженер пулса ĕçлекен завода **виççĕмĕш преми** пама йышăннă.

Пирĕн авиаци тăшманăн чугунçул узелĕсене, аэродромĕсене тата автоколоннисене тапăнни

Майăн 10-мĕшĕнче пирĕн авиаци Киев, Унеча, Дебальцево, Волноваха, Брянск, Орел, Змиевка, Харцызск, Успенская чугунçул узелĕсемпе станцийĕсене вăйлăн пырса тапăннă. Пирĕн самолетсем Брянск—Орел, Людиново—Брянск, Орел—Ограда, Харьков—Белгород—Полтава—Красноград, Лозовая — Барвенково, Красногвардейск—Волосово, Витебск—Новосокольники, Невель — Пустошка çулĕсем çинче тата ытти çулсем çинче те тăшманăн поезчĕсемпе автоколоннисем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнине пула паровозсем, чугунçул эшелонĕсем тата автомашинăсем нумай çĕмĕрĕлнĕ. Киев тата Унеча чугунçул узелĕнче питĕ вăйлă взрывсем пулнă.

Çав вăхăтрах пирĕн авиаци нимĕçсен темиçе аэродромĕ çине бомбăсем нумай пăрахнă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 13-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерў

Майăн 13-мĕшĕнче Кубань таврашĕнче, Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, пирĕн войскăсем тăшмана хирĕç артиллерирен персе тăнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле пăлă улшăнусем те пулман.

* * *

Кубань таврашĕнче, Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, пирĕн артиллеристсем тăшманăн 54 пулемет точкине, артиллерин 19 батарейине тата минометсен 5 батарейине пусарнă, нимĕçсен 2 танкне персе çĕмĕрнĕ, темиçе дзотпа блиндажа аркатса тăкнă. Зенитнăй артиллери нимĕçсен 4 самолетне персе ўкернĕ.

Кубанĕн анат пайĕнче пирĕн отрядсем юлашки вăхăтра тăшман пехотине пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Лисичанск районĕнче пирĕн часçсем тăшманăн темиçе контратакине сире-сире пăрахнă. Нимĕçсен 3 танкне тата гитлеровецсен 2 ротине çити пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 50 салтакне тыткăна илнĕ.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре пĕр-пĕрне хирĕç артиллерипе минометсенчен персе тăнă. Пĕр часăн артиллерисчĕсем нимĕçсен 5 блиндажне пĕтерсе тăкнă, артиллерин тата минометсен 2 батарейине путарнă. Тепĕр участокра нимĕçсен 60 çынтан тăракан разведка отрядне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Волхов фронтĕнче пирĕн артиллеристсем, тăшман позицийĕсене персе тăрса, 15 дзотпа блиндажа аркатса тăкнă, артиллерин темиçе батарейине пусарнă, 6 оруди, 8 пулемет пĕтерсе тăкнă тата боеприпассен 4 складне сирпĕнтернĕ. Совет разведчикĕсен группи нимĕç окопĕсене сасартăк кĕрсе кайнă та кĕске çапăçура 15 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн подразделенисем тата снайперсем нимĕçсен 200 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Старши лейтенант Федоров юлташ командир пулса ертсе пыракан боецсен группи, карнă пралуксем урлă каçса, нимĕç траншейисене кĕрсе кайнă. Штык вĕççĕн пынă çапăçура пирĕн боецсем нимĕçсен 70 салтакне пĕтерсе тăкса хăйсен чаçне чиперех таврăннă.

* * *

Сумы облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ, нимĕçсен карательнăй экспедицине сасартăк тапăнса, 35 гитлеровеца вĕлернĕ. Партизансем кунсăр пуçне нимĕçсен бронемашинине тата 3 грузовой автомашинине çунтарса янă. Партизан-подрывниксен ушкăнĕ майăн 8-мĕшĕнче тăшманăн 2 çар эшелонне ўпĕнтерсе янă. 2 паровоз тата 23 вагон арканса кайнă.

* * *

Гитлеровецсем Германи каторгине вăйпа илсе кайнă совет çыннисем нимĕçсен фашистла пусмăрĕ айĕнче хĕнхур курса пурăнаççĕ. Хăйсен тăванĕсем патне Тамара Н. çапла çырать: «Хаклă аннепе атте! Ют çĕрте эпĕ епле хĕн-хур курнине эсир пĕлес пулсан. Çумăр çунă чухне те, усал çанталăкра та эпĕ тачкăпа çĕр турттаратăп. Пĕрре эпĕ хуçана çумăр иртсе каясса кĕтес пулать тесе каларăм та, вăл мана хĕнесе тăкрĕ. Аттепе анне! Пире кунта выçă усраççĕ. Пĕрре эпĕ ĕçрен килсен, комендант мана ним айăпсăрах хĕнесе тăкрĕ. Çав тери хытă хĕненипе мана шыв сапса тăна кĕртрĕç. Никама та жалоба пама çук. Çакăн пек йывăрлăхсем тўсесси çинчен эпĕ нихăçан та шутламан та, кĕтмен те. Çунатсем пулнă пулсан, тăван çĕршыва вĕçсе пыраттăм. Пусмăрта пурăнма питĕ йывăр. Çывăрма выртсан, питĕрсе илеççĕ. Ирхине 7 сехетрен пуçласа тĕттĕмччĕнех ĕçлетпĕр. Çав тери ывăннипе ура çинче те аран-аран тăратăп. Пирĕнтен кам та пулин чĕрĕ юлĕ-ши, пĕлместĕп».

* * *

Нимĕçсен оккупациллĕ влаçĕсем Голландире Голланди армийĕнче пулнă çар çыннисене пурне те тыткăна лекнĕ çар çыннисен лагерьне яма сборнăй пунктсене пухăнма хушнă. Çак распоряжени Голландире пĕтĕм халăха тарăхтарнă. Çĕршывăн нумай районĕсенче забастовкăсем пуçланса кайнă. Арнхемра верфьри рабочисем туса пĕтермен карапа путарнă. Утрехтре железнодорожниксем 5 паровоза сиенленĕ тата 4 гитлеровеца вĕлернĕ. Амстердамра рабочисем нимĕçсен горючи тата пирăвар склачĕсене пĕтерсе тăкнă. Роттердамра студентсен ушкăнĕ 7 нимĕçе вĕлернĕ тата зенитнăй орудие пĕтерсе тăкнă.

Майăн 14-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерў

Майăн 14-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Кубань таврашĕнче, Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, пирĕн войскăсем тăшман çине персе тăнă. Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле пăлă улшăнусем те пулман.

Пирĕн авиаци Баренц тинĕсĕнче тăшманăн икĕ транспортне тата икĕ тральщикне путарнă.

* * *

Кубань таврашĕнче, Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, совет артиллерисчĕсемпе минометчикĕсем тăшманăн темиçе вуншар дзочĕсемпе блиндажĕсене аркатнă, 5 орудине тата грузсем тиенĕ 13 автомашинине пĕтерсе тăкнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă. Нимĕçсен отрячĕ пирĕн позицисене разведка туса пĕлме хăтланнă. Совет боецĕсем пулеметсемпе тата пăшалсемпе харăссăн персе 40 гитлеровеца вĕлернĕ. Ытти нимĕç салтакĕсем вара васкаса каялла чакнă.

Енер Кубань таврашĕнче сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери пенипе нимĕçсен 11 самолетне персе ўкернĕ. Пирĕн авиацин çухатусем пулман.

* * *

Хĕвеланаç фронтĕнче пирĕн разведка тăвакан отрядсем 100 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Пирĕн летчиксем 40 вагона çĕмĕрнĕ тата горючи хунă 2 склада сирпĕнтерсе янă. Сывлăшри çапăçура нимĕçсен «Фокке Вульф-109» йышши самолетне персе ўкернĕ.

* * *

Лисичанск районĕнче пирĕн подразделенисем активлăн çапăçса хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Тăшман темиçе хут контратака тунă, анчах вĕсене сире-сире янă. 400 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Юлашки çапăçусенче пирĕн подразделенисем нимĕçсенчен 8 оруди, 42 пулемет, 82 автомат, 5 миномет, 250 винтовка ытла тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре пирĕн артиллеристсем тăшманăн обозĕ çине сасартăк пенĕ. Грузсем тиенĕ 100 лава ытла сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă. Зубанов юлташ командир пулса тăракан подразделенири минометчиксем икĕ кун хушшинче гитлеровецсен икĕ ротине çити пĕтерсе тăкнă, икĕ блиндажне аркатнă тата 6 пулемет точкине пусарнă.

* * *

Аяларахра Ровно облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕн командирĕн В. юлташăн записной кĕнекинчен хăшпĕр вырăнсене илсе пичетлетпĕр.

«**Майăн 1-мĕшĕ.** Празднике эпир чугунçул станцине тапăннипе пăлă турăмăр. Тăшманăн гарнизонĕпе вăйлă çапăçу пуçланса кайрĕ. Сталин юлташăн приказĕпе хавхаланнă партизансем гитлеровецсемпе питĕ хастарлăн çапăçрĕç. 65 нимĕç салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă тата çар пурлăхĕн складне сирпĕнтерсе янă.

Майăн 3-мĕшĕ. Подрывниксен ушкăнĕ паян нимĕçсен çар эшелонне ўпĕнтерсе янă.

Майăн 4-мĕшĕ. Хресченсем çапла каласа пачĕç: ĕнер сирпĕнтерсе янă поездăн вагонĕсен ванчăкĕсем айĕнчен нимĕçсем хăйсен салтакĕсемпе офицерĕсен 80 виллине туртса кăларчĕç, терĕç».

* * *

Кубань таврашĕнчи çапăçу хирĕнче Северин уездĕнчи (Румыния) Корнуцел ялĕнчен пĕр Мария Огырчиу ятлă хĕрарăм румынсен 94-мĕш полкĕн 5-мĕш ротинчи Мартин Вильям сержант патне янă çырăва тупнă. Вăл çырура çапла каланă: «Эпĕ манăн упăшкан кунçулĕ çинчен миçе хут ыйтрăм пулин те, халиччен нимĕнле ответ та илеймерĕм. Эпĕ Бухарестра çар министерствинче тата Хĕрлĕ Хĕрес Обществинче пултăм. Темиçе пин хĕрарăм хăйсен ачисемпе пĕрле çав учрежденисенче ирттен пуçласа çĕрлеччен тăраççĕ, анчах нимĕнле ответ та илеймеççĕ. Кунта çакăн пек хыпарсем çўреççĕ: манăн упăшка тăракан дивизие тата Атăлпа Дон патĕнче тăнă мĕнпур дивизисемпе полксене пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă, теççĕ. Мĕншĕн-ха вара халăха çавăн пек намăса пĕлмесĕр улталаççĕ, пиртен çак питĕ хăрушă чăнлăха пытараççĕ?»

* * *

Французсен ирĕклĕ стрелокĕсен темиçе отрячĕн ĕçĕсем çинчен хыпарсем килнĕ. Апрель уйăхĕнче ирĕклĕ стрелоксем 180 паровоза пăснă, çар пурлăхĕ тиенĕ 1.200 вагона тата темиçе çĕр пушă вагона пĕтерсе тăкнă. Партизансем чугунçул çинчи 3 кĕпере сирпĕнтернĕ, 450 тормоз механизмне тата икĕ подъемнăй крана юрăхсăра кăларнă. Чугунçулсем çинче подрывниксен ушкăнĕсем активлăн кĕрешеççĕ. Вĕсем кашни кун тенĕ пекех нимĕçсен пĕр-икĕ поездне ўпĕнтерсе яраççĕ.

Пирĕн авиаци тăшманăн чугунçул узелĕсене, автоколоннисене тата аэродромĕсене тапăнни

Майăн 11-мĕшĕнче тата майăн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиацин йышлă вăйĕсем Днепропетровск, Полтава, Брянск, Харьков, Орел, Красноград, Лозовая, Барвенково, Мценск, Карачев, Людиново, Ярцево тата ытти чугунçул узелĕсемпе станцийĕсене тапăннă. Çавăнпа пĕр вăхăтрах пирĕн самолетсем шоссе çулĕсем çинче тăшманăн автоколоннисем çине бомбăсем пăрахнă.

Пирĕн авиаци тăшманăн çар грузĕсем тиенĕ нумай чугунçул эшелонĕсемпе автомашинисене пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ. Днепропетровск, Полтава тата Брянск чугунçул узелĕсенче боеприпассем тиенĕ эшелонсем тата çар склачĕсем вăйлăн сирпĕне-сирпĕне кайнă.

Пирĕн авиаци тата нимĕçсен темиçе аэродромĕ çине бомбăсем ăнăçлăн пăрахнă.

Пирĕн авиаци Варшава чугунçул узелне тапăнни

Майăн 13-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци Варшава чугунçул узелне тапăннă. Боеприпассемпе хĕçпăшал склачĕсем тата нимĕç эшелонĕсем çине, Варшавăн тата хула çумĕнчи Прагăн (Висла юханшывĕн сылтăм енче) чугунçул станцийĕсен сооруженийĕсемпе çулĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнине пула вăйлă пушарсем тухнă тата чугунçул эшелонĕсемпе çар склачĕсем вăйлăн сирпĕннĕ. Пирĕн авиаци çухатусем туман.

6 çамрăка комсомол ретне илчĕç

КАНАШ. «Париж Коммуни» колхоз çумĕнчи пуçламĕш комсомол организацийĕ хăйĕн йышне ўстерес тĕлĕшпе аван ĕçлеме пуçларĕ. Çак кунсенче колхозра патварлă ĕçлекен 6 çамрăка ВЛКСМ членне илчĕç. Вĕсен шутĕнче колхоз конюхĕ Анастасия Орлова, бригадир Гриша Яковлев уйрăмăнах лайăх енсемпе палăрса тăраççĕ. А. Орлова пăхакан лашасем яланах мăнтăр. Çуракинче пĕр чарăнусăр ĕçлеççĕ. Вăл пĕрремĕш çул конюхра ĕçлет пулин те, лашасене пăхма вĕренсе çитрĕ. Хăй ĕçне юратса тăвать. Çавăн пекех Гриша Яковлев та пур ĕçре те малта пырать. Çуракинче вăл ертсе пыракан бригада аван тĕслĕхсем кăтартса ĕçлет. Комсомола кĕриччен Яковлев юлташ колхозăн вăкăрне ĕçе вĕрентнĕ. Халĕ вăкăрпа уя вăрлăхсем турттараççĕ.

Т. Турхан.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Промысла кооперативĕн артелĕсенчи социализмлă ăмăртăвăн апрель уйăхĕнчи итогĕсем çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ промысла кооперативĕн артелĕсенчи социализмлă ăмăртăвăн 1943 çулхи апрельри итогĕсене пăхса тухнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çўрекен Хĕрлĕ Ялавне «Волга» артельрен илсе, Чăвашдревпромсоюз системинчи Канашри Сталин ячĕпе тăракан артеле (правлени председателĕ Баранов) пама йышăннă тата ăна ĕçре палăрнă работниксене премилеме 10.000 тенкĕ укçа памалла тунă.

Шупашкар районĕнчи Шурккари артеле (правлени председателĕ Степанов, райсовет исполкомĕн председателĕ Миронов) 5.000 тенкĕ преми пама йышăннă.

Етĕрне районĕнчи Пушнарти Чкалов ячĕпе тăракан артеле (правлени председателĕ Алексеева, райсовет исполкомĕн председателĕ Спиридонов) социализмлă ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 3.000 тенкĕ парса премилеме йышăннă.

Совнарком 1943 çулхи апрель уйăхĕнче çак артельсем лайăх ĕçленине палăртнă: Улатăр хулинчи «Красная звезда», «8 марта» тата «Красная швея» артельсем; Элĕк районĕнчи «Самолет» тата Вăрманкасси артелĕсем; Куславкка районĕнчи Киров ячĕпе тăракан тата «Прогресс» артельсем; Октябрьски районри Караньялĕнчи «Труд» тата Хуракассинчи артельсем; Сĕнтĕр районĕнчи «Дружба», «Волга», Пушкăртри «Тĕрлекен» тата Шатракассинчи артельсем; Шупашкарти «Вышивка», «Красный мебельщик», «Пекарь», «Утильсырье», «Кожупряжь», «Кооператор» артельсем; Шупашкар районĕнчи «Правда» тата Заводской ялĕнчи артельсем; Чкаловски районри Чапаев ячĕпе тăракан тата Чăваш Сăкăтĕнчи артельсем; Красноармейски районри «Трудовик» артель, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шĕнерпуçĕнчи тата Банновăрри артельсем; Шăхасан районĕнчи «Сталь» артель; Çĕмĕрле районĕнчи Улхаш тата Çĕмĕрле артелĕсем; Етĕрне районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан тата Ирçе артелĕсем; Калинино районĕнчи Ишлĕ артелĕ; Комсомольски районри Асанкассинчи артель.

Шупашкар хулинчи çамрăксем Совет Союзĕн Геройĕпе Габайдулин юлташпа тĕл пулни

Майăн 12-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çар Çуртĕнче Шупашкар хулинчи çамрăксем Чăваш комсомолĕ вĕрентсе çитĕнтернĕ, халĕ Совет Союзĕн Геройĕ пулса тăнă Геннадий Габайдуллович Габайдулинпа тĕл пулчĕç.

Герой хăйĕн гвардейски чаçĕн мухтавлă ĕçĕсем çинчен каласа пачĕ. Вăл службăра тăракан часть нимĕçсен пиншер салтакĕсемпе офицерĕсене пĕтерсе тăкнă, фронтăн чи ответлă участокĕсенче нимĕçсене хирĕç геройла çапăçнă, Мускав тата Ржев сывăхĕнчи çапăçусенче пулнă. Пирĕн паттăр земляк-разведчик хăйĕн паттăрла ĕçĕ çинчен те каласа пачĕ. Ăна йĕри-тавра фашистсем хупăрласа илнĕ. Вăл хăйпе пĕрле юлнă 6 боецпа пĕрле оборона организацилесе вуншар фрица пĕтерсе тăкнă, юлташĕсем çапăçу хирĕнче вилнĕ. Габайдулин пĕччен кăна тăрса юлнă. Çав çапăçура тăватă хутчен аманнă пулин те 39 нимĕçе персе пăрахнă, окруженирен тухса хамăрăн чаçе çитнĕ.

Габайдулин юлташ хулари çамрăксене фронта пулăшас тĕлĕшпе тата вăйлăрах ĕçлеме чĕнчĕ.

Герой хыççăн заводсенчи стахановецсем, çар гарнизонĕн представителĕсем пĕрин хыççăн тепри трибуна çине хăпарчĕç. Вĕсем пурте мĕнпур вăя фронта пулăшнă çĕре пама пулса тупа турĕç. Комсомолецсен фронтовой бригадин бригадирĕ Корниенко юлташ хăйĕн бригадинчи мĕнпур рабочисем стахановла ĕçлени çинчен, вĕсем ĕç нормине кулленех 220—225 процент тултарни çинчен, чылай рабочисем малашне тата тухăçлăрах ĕçлессишĕн кĕрешни çинчен калать. Цех комсоргĕ Коган юлташ хăй ĕçлекен заводри комсомолецсемпе çамрăксен фронтовой бригадисем плана 300—350 процент тултарни çинчен каласа парать. Заводри çамрăксем,—тет вăл,— Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказĕпе хавхаланса, хăйсен мĕнпур вăйĕсене фронт валли продукци ытларах туса кăларнă çĕре параççĕ.

Тĕлпулу вĕçленес умĕн ВЛКСМ Обкомĕн çарĕç енĕпе ĕçлекен секретарĕ Петрухин юлташ сăмах туса каларĕ.

Уйхирти çурхи ĕçсене—вăрçă вăхăтĕнчи хăвăртлăхпа!

Чăваш республикинчи колхозсенче çураки ĕçĕсем 1943 çулти майăн 10-мĕшĕ тĕлне мĕнле пынине кăтартакан

СВОДКА

РАЙОНСЕМ	Çурхи тырă-сем акнă (процентпа)
Калинински	86,3
Вăрнар	82,8
Шупашкар	81,4
Элĕк	77,5
Красноармейски	76,1
Елчĕк	74,9
Çĕрпӳ	72,4
Комсомольски	71,9
Советски	71,7
Сĕнтĕрвăрри	71,2
Сĕнтĕр	70,6
Етĕрне	70,5
Хĕрлĕ Чутай	69,7
Шăхасан	68,8
Муслей	66,9
Йĕпреç	66,6
Канаш	65,1
Чкаловски	62,3
Октябрьски	59,2
Первомайски	59,2
Куславкка	59,0
Тăвай	55,1
Вăрмар	53,8
Улатăр	53,7
Шăмăршă	53,3
Çĕмĕрле	52,0
Пăрачкав	32,9
Кувакински	24,8
Шупашкар хули	57,2
ЧАССР тărăх	65
Майăн 5-мĕшĕ тĕлне пулнă	42,

ВĂРÇĂ ХУШНĂ ПЕК ĔÇЛЕНĔ ÇĔРТЕ

ПЕРВОМАЙСКОЕ. (Телефонпа). Районри колхозсем çураки ĕçĕсене вĕçлесе пыраççĕ. Майăн 12-мĕшĕ тĕлне районри 17 колхоз çурхи тырăсене акса пĕтерчĕç. Уйрăмăнах Аслă Чемен ялсоветĕнчи колхозсем лайăх ĕçлеççĕ. Ялсовечĕн председателĕ, отечественнăй вăрçă инваличĕ Гаврилов юлташ колхозсене лайăх ертсе пырать. Ялсоветĕнчи «Трудовик», «Париж Коммуни» тата «Заря» колхозсем тĕштырăсене акса пĕтерсе, техникăллă культурăсем акма тытăнчĕç. Çак колхозсем çурхи ĕçсене майăн 16-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех вĕçлеме шутлаççĕ.

Ялсовечĕ малта пыракан колхоза пама куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялав тунă. Вăл Хĕрлĕ ялава «Трудовик» колхоз илнĕ. Ялсовечĕ çураки ĕçĕсем мĕнле пынипе тăтăшах интересленет, çураки мĕнле пыни çинчен исполком ларăвĕнче ултă хут сӳтсе-явнă. Ялсоветĕнчи агитколлектив та тăрăшса ĕçлет, ăна çамрăк коммунист Исаева юлташ ертсе пырать.

Ялсоветĕнче тата унти колхозсенче стена хаçачĕсем лайăх тухса тăраççĕ. Ялсоветĕнчи стена хаçачĕ 15 кунта пĕрре тухса тăрать, колхозсенчи хаçатсем 5 кунта пĕрре тухса тăраççĕ, боевой листоксене икĕ кунта пĕрре кăлараççĕ. Вĕсем çураки вăхăтĕнче 27 номер тухнă.

Ялсоветĕнчи «Трудовик» колхоз (председателĕ Иванов) лайăх ĕçленине уйрăмăнах палăртмалла. Колхоз вăрçă кунĕсенче хăйĕн ĕçне чылай лайăхлатрĕ. Çакна акă мĕнпе çирĕплетсе пама пулать: 1941 çулта колхозра çынсемпе лашасем те çителĕклех пулнă. Унчухне колхозăн 33 лаша пулнă, çураки вăхăтĕнче 106 гектар акмалла пулнă. Çапах та çураки ĕçĕсем 25 куна тăсăлнă. 1943 çулта вара çынсем те, лашасем те сахалланса юлчĕç, çурхи тырăсем акмалли çĕр лаптăкĕ 128 гектара çити ӳсрĕ, лашасем 24 çеç юлчĕç. Анчах колхоз тĕштырă культурисене 18 кун хушшинчех акса пĕтерчĕ.

Кунта колхозниксене хавхалантарса пырас ĕçе аван организациленĕ. Вĕсене премисем параççĕ. Колхоз апрелĕн 25-мĕшĕнче 19 çынна укçан преми панă, майăн 1-мĕшĕнче 8 çынна сысна çурисем парса премиленĕ.

Лашасене кирлерех ĕçре ĕçлеттерес тесе, колхозниксем фермăри тислĕке урапа çине тиесе хире хăйсем турттарса тухаççĕ.

Çуракинче çакăн пек лайăх ĕçлекен колхозниксене тата ытти работниксене хавхалантарса, райсовет исполкомĕ малта пыракан 53 çынна уйрăм çыру ярса тав турĕ.

П. Васильков,
Райсовет исполкомĕн председателĕ.

Куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялав панă

Шупашкарти Союзутиль конторĕ промышленноçа чĕртавар памалли плана тултарас енĕпе Удмурт, Тутар, Мари республикисемпе ăмăртса ĕçленĕ. Çав ăмăртура мала тухнăшăн Шупашкарти Союзутиль конторине Союзутилĕн Тутар республикинчи конторин куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне памалла тунă.

Район çураки ĕçĕсене вĕçлерĕ

КАЛИНИНО, майăн 13-мĕшĕ (**Хамăр корр., телефонпа**). Фронтпа таван çĕршыва пысăк пулăшу парса пырас тĕллеве чи малти вырăна хурса, районри колхозниксемпе колхозницăсем çуракинче тимлĕн, организованно ĕçлерĕç. Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнче панă приказĕ халăха çĕнĕ вăйпа тимлĕн ĕçлеме хавхалантарчĕ.

Район, пĕтĕмĕшпе илсен, тĕштырăсем тата пăрçа йышши культурăсем акмалли плана 9—10 талăк хушшинче ăнăçлăн вĕçлерĕ. План тăрăх кăçал Калинино районĕнчи колхозсем тĕштырăсене 8.551 гектар акмалла пулнă пулсан, майăн 12-мĕшĕ тĕлне 8.602 гектар акнă. Кунсăр пуçне, оборона фондне хывма 350 гектар тата нимĕç захватчикĕсенчен сиен курнă колхозниксемпе колхозницăсене пулăшма 400 гектар тĕштырă акса хăварнă.

Халĕ районри пур колхозсенче те çĕрулмипе пахча-çимĕç лартас ĕç пырать. Паянхи куна 475 гектар çине çĕрулми лартнă. Майăн 11-мĕшĕ тĕлне Çавалкассинчи „Çутталла", Туçи Мăратри „Клевер", Ягункинари „Броневик" колхозсем çĕрулми лартса пĕтерчĕç. Чылай колхозсем çĕрулмине кăçал яровизацилесе лартаççĕ.

С. Шадин.

Пирĕн трактористсем

ЭЛĔК. Аристарх Федотов юлташ пирĕн МТС-а ĕçлеме вăрçă пуçлансан килчĕ. Вăл 50 çулта. Нумай çул хушши ĕçлесе канăçа тухма тивĕç илнĕ вăл. Анчах камшăн тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕ хаклă, çавă халĕ ĕçрен аякра тăма пултараймасть.

Тĕплĕн те çирĕп юсарĕ вăл хăй ĕçлекен трактора. Çуракине вăхăтра тухрĕ. Малтанхи кунах лайăх ĕçлерĕ. Малаллахи кунсенче тракторăн ĕç пахалăхĕпе хăвăртлăхне ӳстерсе пычĕ. Аристарх Федотов паянхи куна 80 гектар сухаларĕ, горючине 32 килограмм перекетлесе хăварчĕ. Çуракин малтанхи 15 кунĕнче вăл 45 гектар сухаламалла пулсан, çак нормăна Аристарх Федотов 9—10 кун хушшинчех ирттерсе пурнăçларĕ.

Çакăн пек пысăк тимлĕхпе ĕçлекен трактористсем пирĕн МТС-ра чылай. Çамрăксем те, ваттисем те тракторсемпе тухăçлăн ĕçлеççĕ.

П. Васильев—коммунист, трактор бригадин бригадирĕ. Çураки ĕçĕсенче вăл бригадăна лайăх ертсе пырать. Бригада Тавăтри «Сталинит» колхозăн уйхирĕсенче ĕçлерĕ. Çуракинче пурĕ 207 гектар сухаламалла, бригада майăн 11-мĕшĕ тĕлне 269 гектар сухаларĕ.

Арсентий Иванов кăçал трактор çинче малтанхи çул ĕçлет. Вăл çамрăк-ха, 17 çулта çеç. Майăн 10-мĕшĕ тĕлне вăл хăйĕн сменинче 33 гектар сухаларĕ, норма 45 гектар.

Мухтама тивĕçлĕ ĕçлеççĕ кăçал нумай трактористсем.

Виçĕ районри колхозсен уйхирĕсенче ĕçлеççĕ пирĕн МТС-ăн тракторĕсем. 14 бригадăран 7-шĕ майăн 11-мĕшĕ тĕлне хăйсен çуракинчи планĕсене ăнăçлăн пурнăçларĕç, 5 бригада плана ирттерсе тултарчĕ.

И. Яхваров.
МТС директорĕ.

СТАЛИН юлташ приказĕ пурнăçра

Анлă Атăл шывĕн сылтăм хĕррипе ларса тухнă колхозсенчен пĕри—Волгарь ятлă. Çураки ĕçĕсем пуçланни çинчен «Волгарь» колхоз сводкăсем пама тытăнсанах, «асаттесем ĕçлеме пуçларĕç», терĕç районра ĕçлекенсем, мĕншĕн тесен «Волгарь» колхозра 10—15 ватă старик, 60—70 çула çитнĕскерсем, ĕçлеççĕ.

— Ялтан çĕр çынна ытла Хĕрлĕ Çара ăсатрăмăр. Колхозри ĕçе пирĕн çине шанса хăварчĕç вĕсем,—теççĕ «Волгарь» колхозри ватă колхозниксем.

Ялтан 4—5 хĕрарăм çĕклемсемпе хире тăрă шыв йăтса тухаççĕ. Кама ĕçтерме илсе каяççĕ вĕсем ăна? «Кăнтăрлахи канăва чарăниччен пĕрср сехет маларах эпир лашасене çуршар витре уçă шыв паратпăр. Çакă вăл вăриленнĕ лашасене апата чарăниччен уçăлтарать, уçăмлăрах ĕçлеме май парать. Тăварсан вара апатне те лайăх çиеççĕ вĕсем»,—каласа пачĕ председатель Михаил Никитович Оливанов юлташ.

Вăрман çумĕнчи участокра 7-мĕш бригада ĕçлет. Сӳрелеççĕ.

— Хĕвел аниччен пĕтеретпĕр паян. Ку участок пирĕн çĕнни-ха. Кăçалхипе иккĕмĕш хут çеç акатпăр кунта. Тункатасен вак тымарĕсем халĕ те пур-ха. Кансĕртерех ĕçлеме. Çавăнпа икĕ хут сӳрелетпĕр, иккĕмĕш хут халь сухаланине урлă сӳрелеттересшĕн, лайăхрах ванать,—тет шурă сухаллă колхозник Василий Федорович Федоров юлташ, колхоз бригадирĕ. Çамрăк çын хастарлăхĕпе ĕçлет вăл, кунĕн-çĕрĕн уйра, ĕçре. Хăйĕн бригадинче çеç мар, ытти бригадăсенче пулма та вăхăт тупать. Колхозниксене ĕçе пахарах тăвасси çинчен аса илтерет, вĕрентет.

«Волгарь» колхозникĕсем кăçал нихăçанхинчен те вăйлăрах тырпул туса илме тăрăшаççĕ. Çурхи тырăсен пуссине вĕсем 1.150 лав тислĕк хурса çемçетрĕç, кĕрхи тырăсем çине 39 центнер кĕл, 29 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хурса апат парчĕç. Çурхи тырăсене пурне те «Парижская зелень» текен порошокпа тата формалинпа çуса, машинăсемпе акаççĕ.

Çурхи кунăн кашни сехечĕпе туллин усă курас тесе, колхозниксемпе колхозницăсем талăкра 14—15-шер сехет ĕçлеççĕ. Социализмлă ăмăртса ĕçлесси малтанхи кунсенчех анлăн сарăлчĕ. Çухаçăсем Е. Алаева, Д. Унтицаева, А. Федотова тата ытти нумай колхозниксем ĕç нормине тăтăшах ирттерсе тултарса пыраççĕ. Иван Федотов юлташ, фронтран аманса таврăннăскер, хăрах алăпа çеç ĕçлет пулин те, тырă акас ĕçре нормăна кулленех 140 процент тултарать. Çуракинче лайăх ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсене премилеме колхоз правленийĕ 2.000 тенкĕ укça уйăрса хунă.

Ирхи кӳлĕмре хĕрсе ĕçленĕ колхозниксем кăнтăрлахи канăва тухрĕç. Çуллă какай яшки çинĕ хыççăн табак туртса ячĕç.

— Паян Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказне вуласа ăнланăпăр,—терĕ агитатор Иванова юлташ, колхозниксем хушшине ларса.

Верховный Главнокомандующийĕн Сталин юлташăн приказне тимлĕн итлесе ларчĕç. Боевой приказа вуласа пĕтернĕ хыççăн 65 çулхи колхозник Федоров юлташ çапла каларĕ:

— Эпĕ Сталин юлташăн сăмахне лайăх ăнлантăм. Пирĕн юратнă ывăлхĕрсем тăшмана хăвăртрах çĕнтерсе тăкса вăрçă хирĕнчен киле таврăнччăр тесен, пĕтĕм вăя хурса ĕçлесе фронта пулăшас пулать. Тырă нумайрах туса илмелле. Вăл пурне валли те çиттĕр—фронт валли те, хамăра та çиттĕр. Çакăншăн пĕтĕм вăйран ĕçленĕ эпир, малалла та ĕçлĕпĕр, — терĕ вăл, çурхи тырă акнă уйхирсем çине мăнкăмăллăн пăхса илсе.

Сталин юлташăн боевой приказне пурнăçласа пырса, «Волгарь» колхоз членĕсем—хисеплĕ стариксем, ачапăчаллă хĕрарăмсем тата çамрăк ачасемпе хĕрачасем çурхи тырăсене кăçал пысăк пахалăхпа 8 талăк хушшинче акса пĕтерчĕç.

В. ЛЮБИМОВ.

КОМСОМОЛ ПУРНĂÇĔ

Яланлăх комисси хĕрӳллĕ ĕçре

ВЛКСМ Комсомольски райкомĕн пропагандăпа агитаци ĕçĕн яланлăх комиссийĕ 9 çынран тăрать. Унăн ĕçне комсомол активисчĕсем Барашевская, Фролова, Махмутова тата ытти юлташсем активлăн хутшăнаççĕ. Вĕсен кашнин уйрăм ĕç участокĕсем пур.

Комисси уйăхсеренех ĕç планне çирĕплетет. Комисси членĕсем пĕрпĕрин доклачĕсене пухăнса итлеççĕ, сӳтсе-яваççĕ. Кăçал кăна комисси членĕсем чылай темăсемпе 89 доклад ирттернĕ. Сталин юлташăн 1943 çулхи февралĕн 23-мĕшĕнче каларнă приказне ăнлантарса парас тĕллĕшпе тăватă çĕрте кружоксем организациленĕ. Вĕсене комисси членĕсем ертсе пынă.

Хĕл вăхăтĕнче пĕр агитбригада ĕçленĕ. Унта Комсомольскинчи вăтам шкулти комсомолецсемпе райцентрти служащисем тăнă. Çак агитбригада 6 ялсоветра спектакльсем лартнă тата бригадăн пĕр членĕ «Хальхи вăхăт тата пирĕн задачăсем» çинчен доклад туса панă. Доклад тăвакансем колхозсен, бригадăсен, фермăсен çитĕнĕвĕсемпе, колхоз пурнăçĕнчен илнĕ вырăнти материалпа анлăн усă курнă. Çапла вара агитбригада выступленийĕсене 1200 çын ытла итленĕ.

Яланлăх комисси «ВКП(б) историйĕн Кĕске курсне» харпăрхăй тĕллĕн вĕренекен комсомолецсене пулăшас тĕллĕшпе те пысăк ĕçсем туса ирттернĕ. Колхозсенче парти историне вĕренекенсемпе тĕлпулса калаçассине лайăх организациленĕ. Районри 216 комсомолец ВКП(б) историйĕн кĕске курсне вĕренеççĕ, кунсăр пуçне 15 комсомолец парти историне Маркс — Энгельс — Ленин — Сталин произведенийĕсем тăрăх вĕренме тытăннă.

Комисси членĕсем комсомолăн ялсенчи йышсăр организацийĕсене çирĕплетес тĕллĕшпе çамрăксен пухăвĕсене ирттернĕ. Çав пухусенче „Комсомол Тăван çĕршывшăн кĕрешнĕ çĕрте" ятлă темăпа докладсем туса панă. Комисси членĕсен вăйĕпе 6 колхозра комсомол организацийĕсем çĕнĕрен организациленĕ, 3 колхозри организаци пысăклатнă. Комисси членĕсем Махмутова, Соколова, Фролова юлташсем комсомола кĕрекенсене рекомендацисем чылай панă.

Районра пурĕ 20 вулав çурчĕ тата 8 клуб пур. Вĕсенче избачсем пулса 17 комсомолец ĕçлеççĕ. ВЛКСМ райкомĕ райçутĕç пайĕпе пĕрле комсомолец-избачсене пухса семинар ирттернĕ. Кунсăр пуçне комисси членĕсем вырăна тухса пулăшу панă. Кăçалхи апрелĕн 1-мĕшĕпе 10-мĕшĕ хушшинче ялти çутĕç учрежденийĕсем çуракине мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслес шутпа рейд туса ирттернĕ. Рейд вăхăтĕнче 6 вулав çуртĕнче вĕсен советĕсене организациленĕ тата витринăсем организацилеме пулăшнă.

Районри 246 агитатортан 155-ше — комсомолецсем. 51 комсомолец колхозсенче тухакан стена хаçачĕсен редакторĕсем, 118 комсомолец бригадăсенче тухакан стена хаçачĕсен редакторĕсем пулса ĕçлеççĕ. Районра 32 драмкружок, 17 хор кружокĕ, 6 аласта кружокĕ, 3 художествăллă кружок йĕркеллĕ ĕçлеççĕ.

Массăллă-политикăллă мĕнпур ĕçе колхозсемпе МТС ĕçне лайăхлатас тĕллевпе туса пыраççĕ.

ВЛКСМ райкомĕсенчи пропагандăпа агитаци ĕçĕн яланлăх комиссийĕсен Комсомольски районри комиссирен пример илсе ĕçлес пулать.

Л. Михайлов.
ВЛКСМ Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

Агитколлектив аван ĕçлет

КАНАШ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Вырăскас Пикшихри агитколлектив коммунистсемпе комсомолецсене тата партире тăман агитаторсене 20 çынна пĕрлештерсе тăрать. Агитколлектива парти членĕ, ялсовет исполкомĕн председателĕ К. Савельев юлташ ертсе пырать.

Агитколлектив хăйĕн ĕçне яланах план тăрăх туса пырать. Ĕç планне малтан комсомолецсемпе коммунистсен пухăвĕнче çирĕплетеççĕ, ун хыççăн агитаторсене пăлаштарас тĕллĕшпе плана агитколлективăн канашлăвĕнче сӳтсе-яваççĕ.

Çураки пуçланас умĕн агитаторсене кашни бригада çумне çирĕплетнĕ. Çуракин малтанхи кунĕнчех агитаторсем колхозниксем ĕçленĕ çĕре тухса хаçатсем вуласа панă, Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене ăнлантарса панă, кашни бригадăрах стена хаçачĕсем кăларнă.

Агитаторсем партипе правительство постановленийĕсемпе решенийĕсене колхозниксене лайăхрах ăнлантарса парас тĕллĕшпе кашни 5 кунтах семинарсем туса ирттереççĕ. Пĕр-пĕрин ĕçĕнчи опытсемпе паллашас тĕллĕшпе докладсем итлеççĕ. Çапла туни вĕсене хăйсен политикăллă пĕлĕвĕсене ӳстерме те май парать.

Колхозниксем хушшинчи массăллă ăнлантару ĕçне уйрăмăнах комсомолецсем лайăх туса пыраççĕ. Комсомолăн пуçламĕш организаци секретарĕ М. Васильева юлташ колхозниксене кашни кунах икшер хутчен хаçат-журналсем вуласа парать, Хĕрлĕ Çарăн фронтри ĕçĕсем çинчен тĕплĕн каласа ăнлантарать. Çавăн пекех Н. Харитонов, М. Васильев, М. Николаева, Т. Кондратьева, А. Румянова агитаторсем те хăйсен ĕçĕсене тивĕçлипе туса пыраççĕ.

Агитаторсем тăрăшса ĕçлени ахаль çухалмасть. Колхоз çураки ĕçĕсене ăнăçлăн туса пырать. Сухалакансемпе акакансем кулленех нормăна ирттерсе тултараççĕ, агротехника правилисене тĕплĕн пурнăçласа пыраççĕ.

В. Веселов.

60 ÇУЛТИ ПАТРИОТ

ШАХАСАН. Матьшӳри «Молодой колхозник» колхоз членĕ Василий Алексеев 60 çултан иртнĕ. Унăн тăватă ывăлĕ отечественнăй вăрçă фрончĕсенче çапăçаççĕ. В. Алексеев юлташ хăй ватă пулин те иртнĕ çул 300 ĕçкунĕ ытла тунă, кăçал 100 ĕçкунĕ тунă.

Ватă патриот хăйĕн ывăлĕсемпе тивĕçлипе мухтанать, вĕсене вăл хăйĕн пархатарлă ĕçĕсемпе пулăшса тăрать.

В. В.

НИМĔÇ САМОЛЕЧĔСЕМ ЛИСКИ ЧУГУНÇУЛ СТАНЦИНЕ ТАПĂННĂ

Майăн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле нимĕç авиацийĕ Лиски чугунçул станцине пырса тапăннă. Тăшман самолечĕсем вут тивертекен тата фугаслă бомбăсем пăрахнă. Йышлă мар жертвăсем пур. Станцири чугунçул сооруженийĕсене сиенлемен. Хăваласа янă чухне нимĕçсен 5 самолетне персе ӳкернĕ. Пирĕн авиаци çухатусем туман.

Ют çĕршывсенче

Тунисри вăрçă ĕçĕсем

ТĔНĔЛ ДЕРЖАВИСЕН ВОЙСКИСЕМ ТУНИСРА ХИРĔÇ ТĂМА ПĂРАХНĂ

ЛОНДОН, майăн 12-мĕшĕ (ТАСС). Рейтер агентстви официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Италипе Германи войскисем Тунисра хĕçпăшалла хирĕç тăрасси майăн 12-мĕшĕнче 20 сехет те 15 минутăра чарăннă.

ФОН АРНИМ ГЕНЕРАЛА ТЫТКĂНА ИЛНĔ

ЛОНДОН, майăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Германипе Италин Тунисри войскисен главнокомандующийĕ генерал-полковник фон Арним тыткăна лекнĕ.

ФОН АРНИМ ТЫТКĂНА ЕПЛЕ ЛЕКНИ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, майăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Англин Тунисри 1-мĕш армийĕ çумĕнчи Рейтер агентствин специальнăй корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, фон Арним генерал-полковника Индин 4-мĕш дивизийĕн чаçĕсем тыткăна илнĕ. Хăйне тыткăна иличчен вăл Андерсен генерал патне мĕнле условипе парăнмалли çинчен пĕлме парламентерсем янă пулнă. Анчах çав вăхăтра ăна сасартăк Сент-Мари дю Зитри хăйĕн штабĕнче Инди дивизийĕн малалла хăвăрт куçнă чаçĕ пырса тытнă.

Ĕнер каçхине Англин 8-мĕш армийĕн чаçĕсем Тунисăн кăнтăр пайĕнче Итали войскисен командующине Мессе генерала тыткăна илнĕ.

МАЙĂН 5-МĔШĔНЧЕН ПУÇЛАСА ТУНИСРА 150 ПИН ÇЫННА ТЫТКĂНА ИЛНĔ

ЛОНДОН, майăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Алжирти радио майăн 12-мĕшĕнче каçхине союзниксен вăйĕсен Çурçĕр Африкăри штабĕн ятарласа каларнă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: майăн 5-мĕшĕнчен пуçласа тыткăна илнисен хисепĕ 150 пин çынна çитет. Артиллери орудийĕсем тата тĕрлĕ çар хатĕрĕсем, вăл шутра юсавлă орудисемпе самолетсем нумай тытса илнĕ.

ЛОНДОН, майăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри штабĕ çумĕнчи Рейтер агентствин специальнăй корреспонденчĕсем пĕлтернĕ тăрăх, тыткăна лекнисем хушшинче нимĕçсен тата икĕ генералĕ пур — 90-мĕш çăмăл пехотнăй дивизин командирĕ тата бронетанковăй 10-мĕш дивизин командирĕ. Фон Арнимпа пĕрле нимĕçсемпе итальянецсен 11 генерале тыткăна илнĕ.

Черчилль Вашингтонра

ЛОНДОН, майăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, Англипе Америкăн генеральнăй штабĕсем хушшинчи калаçу майăн 13-мĕшĕнчи ирччен пынă. Паян Черчилльпе Рузвельт хушшинчи калаçу малалла пымалла. Черчилль Вашингтонра мĕн чухлĕ пурăнасси çинчен пĕлтермеççĕ, анчах вăл кунта темиçе куна юлать пулĕ тесе шутлаççĕ, мĕншĕн тесен Канада премьер-министрĕ Маккензи Каинг калаçăва хутшăнма Вашингтона пыма шутлани çинчен пĕлтернĕ.

Жиропа де Голль тĕл пулас умĕн

ЛОНДОН, майăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Алжирти радио пĕлтернĕ тăрăх, Жиро генерал де Голль генерала Маракешра (Марокко) е Бискрăра (Алжир) тĕл пулма чĕннĕ. Жиро ăна апрелĕн 27-мĕшĕнче де Голль патне янă çырура чĕннĕ. „Сире юрăхлă кунра майăн 5-мĕшĕ иртсен Маракешра е Бискрăра тĕл пулма сĕнетĕп эпĕ, тесе çырнă Жиро де Голль патне. Çĕнĕ килĕшӳ çине алă пуснă хыççăн эпир пĕрле Алжира пырса пĕрле ĕçлеме пуçлăпăр", тенĕ.

АНГЛИ БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ ДУИСБУРГА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, майăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, майăн 13-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Дуисбурга тапăннă, ăна тапăнни вăрçă пуçланнăранпа чи вăйли пулнă. Операцисен результачĕсем пит аван. 34 самолет хăйсен базисене таврăнман.

Союзниксен авиацийĕ Марсалăпа Пантеллерине тапăннă

ЛОНДОН, майăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри штабĕн пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: ĕнер кăнтăрла союзниксен нумай бомбардировщикĕсем 100 ытла истребительсемпе пĕрле Марсала портне (Сицилия) тапăннă.

Тулонпа Ниццăри халăхăн пĕр пайне эвакуациленĕ

ЛОНДОН, майăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Афи агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Цюрихра (Швейцария) Кăнтăр Францири оккупацилĕ влаçсем Тулонпа Ниццăри гражданла халăхăн пĕр пайне эвакуацилеме приказ панă.

Пушарпа кĕрешме яланах хатĕр тăмалла

Юлашки вăхăтра предприятисемпе колхозсенче пушартан сыхланас ĕçе чылаях лайăхлатрĕç. Анчах хăшпĕр çĕрте çак ĕçре пысăк çитменлĕхсем курма пулать.

Çиелтен пăхсан пурте йĕркеллĕ пек: пушар депоне, вышкине йĕркеллĕн туса лартнă. Анчах шыв тытса усрамалли вырăн тăвасси çинчен маннă. Сăмахран, Çĕмĕрлери «Труженик» артельре, Йĕпреç райцентрĕнче пушарпа кĕрешмелли инвентарьсем хатĕрленипех лăпланса ларнă. Пичкесенче шыв çук.

Кăçал Вăрмар, Канаш, Сĕнтĕр районĕсенче пушарсем пулнă. Çак тĕслĕхсем ялсенче вут-кăвартан сыхланас тĕллĕшпе ăнлантарулла ĕçе çителĕксĕр туса пынине кăтартаççĕ.

Ялти пĕтĕм общественноçăн пушартан сыхă тăрас енĕпе куллен ĕçлесе пымалла. Ялти массăна вут-кăвартан сыхланасси çинчен тăтăшах ăнлантарса тăмалла. Çырмасенчи шывсене пĕвелемелле. Пĕвесем, кӳлĕсем, вăйлă çăлсем ытларах юсавлă тытмалла. Кашни çурт умĕнчех пысăк каткасемпе шыв тытса тăмалла.

И. Жезлов,
Чăваш АССР НКВД çумĕнчи пожарнăй охрана отделĕн инструкторĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Майăн 3-мĕшĕнчен пуçласа 15-мĕшне çитиччен Водосвет (Ленин урамĕ, 19) электроэнергипе усă куракансене тепĕр хут регистраци тăвать.

Регистрацилени çинчен алла справка илменнисене 1943 çулхи майăн 15-мĕшĕ хыççăн энерги пама пăрахаççĕ тата Горисполком 1942 çулхи ноябрĕн 28-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх айăплаççĕ.

2—1. Водосвет.

Шупашкар хулинче пурăнса пособи е пенси илекен граждансен пурин те Гособеспеченипе çар çыннисен çемьисене пулăшас тĕллĕшпе ĕçлекен отдела (Горисполком, 11-мĕш номерлĕ пӳлĕм) майăн 15-мĕшĕ тĕлне хăйсем пурăннă çĕртен справкăсем тăратмалла. Вăл справкăсенче ăçта пурăннине (адрес), çемьере миçе çын пуррине, миçе çултине (хăш çулта тата хăш уйăхра çуралнине) кăтартса памалла.

Çав справкăсене вăхăтра тăратманни май уйăхĕшĕн пособи илессине чăрмантарма пултарать.

Гособеспеченипе çар çыннисен çемьисене пулăшас тĕллĕшпе ĕçлекен отдел

Чăваш АССР-ĕнчи Коопинстрахкассăна старши бухгалтер, счетовод, ĕçе сыхлакан инспектор тата инструктор кирлĕ.

Занятисен вăхăтĕнче çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар, Максим Горький урамĕ, 32-мĕш çурт.

Росглаввинон Шупашкарти эрех комбиначĕ лартмашкăн улмуççи, хурлăхан тата хăмлаçырли йывăççисем кирек мĕн чухлĕ сутать.

5—4.

Шупашкарти эрех комбинатне ялхуçалăхĕнче ялан ĕçлеме рабочисем кирлĕ. Пĕчченнисене общежити параççĕ, столовăй пур, кашнине хăйшĕн пахча-çимĕç лартса тума çĕр участокĕ параççĕ.

Государство учрежденине çакăн пек работниксем кирлĕ: снабжени енĕпе ответлă исполнитель, строительствăри кладовщиксем, снабжени агенчĕсем, сторожсем.

Учрежденире столовăй пур.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар, Володарский урамĕ, Пичет çурчĕ, 2-мĕш этаж, 17-мĕш пӳлĕм.

2—1.

14-мĕш номерлĕ почта ещĕклĕ объекта гл. бухгалтер, счетовод, экономист, кадрсем енĕпе тата мобилизаци енĕпе ĕçлекен инспектор, слесарьсем, электромонтерсем, машинистсем, электросварщиксем кирлĕ.

6—02 номерлĕ телефонпа (икĕ звонок) 8 сехетрен пуçласа 10 сехетчен тата 17 сехетрен пуçласа 19 сехетчен ыйтса пĕлме пулать.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2 Ф. 6. 58. 42 п.

НТ 1055